27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ОКТЯБРЬ 28 ШАМАТКУН 213(6708) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ПЕТРОВА

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, хăвăрттăн наступлени туса пырса, паян, октябрĕн 27-мĕшĕнче, Чехословаки республикин территорийĕ çинче Карпат леш енчи Украинăн тĕп хулине — УЖГОРОДА — çулйĕрсен пысăк узелне, тăшман оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне туртса илнĕ.

УЖГОРОД хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ЖУРАВЛЕВ генерал-лейтенантăн, АФОНИН генерал-майорăн, МЕЛЬНИКОВ генерал-майорăн, ДРЕМИН генерал-майорăн, ПОДШИВАЙЛОВ генерал-майорăн, ФРОЛОВ генерал-майорăн, ФАДЕЕВ генерал-майорăн, ПРОХОРОВ генерал-майорăн, ЧЕРНЫЙ полковникăн, ЖЕРДИЕНКО полковникăн, ПЕШКОВ полковникăн, АКУЛОВ подполковникăн, ТАРАСОВ майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн КАРИОФИЛЛИН, артиллери генерал-майорĕн НАЙДЕНКОВАН, ВОРОБЬЕВ полковникăн, НОВИКОВ полковникăн, БРУК подполковникăн, ЯШИН подполковникăн, НЮХАЛОВ подполковникăн, НАЗАРОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн СОЛОВЬЕВАН, МОРУС полковникăн, ОЛЬХОВЕНКО подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖДАНОВАН, ЧУК полковникăн, БАРУЛИН майорăн, ШАПЕЛЬСКИЙ майорăн, МАРГОШИН майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛЕСНИКОВАН, БУХАРЕВ полковникăн, НАУМОВ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАТВЕЕВАН, СТЕПАНЯН полковникăн, КОРОТКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăхах палăртса хăварас тесе, УЖГОРОД хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «УЖГОРОДСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратăс.

Паян, октябрĕн 27-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăвата тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, УЖГОРОД хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан çарсене, УЖГОРОД хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 27-мĕшĕ.

Вырьăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленмелле

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, халĕ республикăри колхозсенче выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине государство енчен тĕрĕслесе тухас ĕç пырать. Çак тĕллĕшпе районсенче ятарласа тунă государственнăй комиссисем ĕçлеççĕ. Тĕрĕслӳ кăçалхи ноябрĕн 5-мĕшне çити пымалла. Çак вăхăт тĕлне колхозсем выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла тата çак ĕçре палăрнă çитменлĕхсене пĕтĕмĕшпех пĕтермелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç кăçал республикăри колхозсенче пачах та çителĕксĕр пулса пырать. Кăçалхи 9 уйăх хушшинче республикăри колхозсенче, начар пăхса усранă пирки тата кирлĕ пек тăрантарман пирки, пăрусен 25 проценчĕ, сысна çурисен 21 проценчĕ, путексен 42 проценчĕ вилсе пĕтнĕ. Çамрăк выльăхсем уйрăмах Шăмăршă, Çĕмĕрле, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Канаш, Ишлей, Первомайски тата ытти районсенче нумай вилнĕ. Çакна пула государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне республикăри колхозсем октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕнесем енĕпе 82,4 процент, сурăхсем енĕпе 80,2 процент тата сыснасем енĕпе 75,1 процент çеç тултарнă.

Лашасене пăхса усрас тата ĕрчетес ĕç питĕ çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать. Лашасене начар пăхнă пирки тата вĕсемпе усă курас ĕçре обезличка пулнă пирки, кăçалхи 9 уйăх хушшинче республикăра темиçе пин лаша вилнĕ, çавăнпа вĕсен хисепĕ нумай чакнă. Хĕрлĕ Чутай районĕнче лашасен хисепĕ 32 процент чухлĕ, Шăмăршă районĕнче 40 процент чухлĕ, Пăрачкав районĕнче 38 процент чухлĕ чакнă. Сентябрь уйăхĕнче кăна Комсомольски районри колхозсенче 51 лаша, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 45 лаша, Пăрачкав районĕнче 48 лаша вилнĕ. Çав вăхăтрах тихасем илсе пăхса ӳстерес ĕç те çав тери япăх пулса пырать. Нумай колхозсенче пĕтĕ кĕсресене упраса усрама тăрăшмаççĕ. Вĕсемпе йывăр ĕçре усă кураççĕ, тĕрĕс тăрантармаççĕ, нумай чухне вара кĕсресем хăм пăрахаççĕ.

Çӳлте кăтартса панă фактсем акă мĕн çинчен калаççĕ: выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, ăна пăхса усрас тата унпа усă курас ĕç халĕ республикăри партипе совет тата комсомол организацийĕсем умĕнче, колхоз руководителĕсемпе пĕтĕм колхозниксем умĕнче тăракан чи пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Республикăри колхозсем кăçал вăйлă тырпул туса илес тесе начар мар кĕрешрĕç. Анчах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕллĕшпе пирĕн тырпулшăн кĕрешнинчен кая мар, вăйлăрах та кĕрешмелле. Мĕншĕн тесен çак ĕç, юлашки вăхăтра партипе совет организацисем тата колхозсен руководителĕсем ун çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхнă пирки чылай сӳрĕкленчĕ.

Паллă ĕнтĕ, йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пуринчен малтан выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлени кирлĕ. Апла пулин те, хăшпĕр районсенче çак чăнлăха асра тытмаççĕ. Сăмахран, Шăхасан, Елчĕк, Чкаловски тата Канаш районĕсенче фермăсен заведующийĕсене шултăра апат кирлинчен 8—16 процент чухлĕ кăна панă. Хатĕрленĕ выльăх апатне тирпейсĕр тыткалани тата тăккаласа е çĕртсе пĕтерни те колхозсенче сахал мар пулкалать.

Выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхса усрас, çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тесен, кашни колхозрах ăшă тытмалла туса юсаса хатĕрленĕ витесем çителĕклĕ пулмалла. Анчах çак ĕç те тивĕçлипе пулса пырать тесе калама пултараймастпăр-ха. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсенче лаша витисене 64 процент, ĕне витисене 58 процент, сурăх витисене 54 процент, сысна витисене 60 процент тата чăх-чĕп усрамалли çуртйĕрсене 63 процент кăна юсаса хатĕрленĕ. Çак ĕç Пăрачкав, Элĕк, Улатăр, Советски тата ытти районсенче уйрăмах начар пырать. Выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене начар хатĕрленине пула хĕлле выльăхсем вилме пултараççĕ тата вĕсен тухăçлăхĕ нумай чакма пултарать, çакна çӳлте асăннă районсенче шута илмеççĕ.

Республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çакăн пек çителĕксĕр пулса пынипе пачах та килĕшме çук. Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксен халĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине нихăçанхи пек мар тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Пирĕн республикăри колхозсен выльăх ĕрчетес енĕпе начар мар опыт пур. Çав опытпа усă курса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла.

Çак задачăна татса парасси вара нумай енĕпе хĕле хатĕрленнинчен килет. Çавăнпа та республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине государство енчен тĕрĕслесси питех те пысăк вырăн йышăнакан ĕç пулса тăрать. Тĕрĕслӳ комиссисен кашни колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пулса пынине, выльăх апачĕ пухса çитернипе çитерменнине тĕплĕн пăхса тухмалла, вăл ĕçре палăрнă çитменлĕхсене пĕтерме васкавлă мерăсем йышăнмалла.

Хатĕрленĕ выльăх апатне шута илес, ăна акт çырса выльăх-чĕрлĕх фермисене парас ĕçе ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле. Выльăх апатне расходламалли нормăсене тата кашни уйăхри плансене пăхса тухса, райисполкомсен ларăвĕсенче çирĕплетмелле. Çакăн пек йĕрке тăвас пулать: выльăх апатне мĕнле расходланине колхоз председателĕ хăй ялан тĕрĕслесе тăмалла.

Çак кунсенчех выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене ăшă тытмалла туса юсаса çитермелле. Выльăх витисене юсаса пĕтермен колхозсенче çак енĕпе ĕçлеме халех бригадăсем тумалла, вăл бригадăсене кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕпе турттăм вăйĕ уйăрса памалла. Кĕркуннехи вăхăтра колхозсенче çамрăк выльăхсем нумай хутшăнаççĕ. Çакна шута илсе, вĕсене сыхласа усрама май тăвас шутпа, çамрăк выльăхсене усрама уйрăм тата ăшă çуртйĕрсем, çителĕклĕ апат хатĕрлесе хурас пулать.

Лашасемпе усă курас ĕçри обезличкăна пĕтерес тĕллĕшпе мерăсем йышăнман руководительсене, пăхса усрама тата тыткалама пĕлмен пирки лашасене нумай вĕлерсе пĕтернĕ колхозсен председателĕсене партипе правительство çирĕп ответ тыттарма хушаççĕ. Çакна ĕнтĕ ăнланмалла та, мĕншĕн тесен пăхса усрама тата тыткалама пĕлмен пирки колхозсенче лашасем вилни колхозсене хăйсене те, государствăна та пысăк сиен кӳрет. Çавăнпа та ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен лаша ĕрчетес ĕç мĕнле пынипе яланах тимлĕн интересленмелле, партипе комсомолăн пуçламĕш организацисен тата колхоз председателĕсен отчечĕсене тăтăшах итлесе сӳтсе явмалла, ку ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕллĕшпе вăхăтра мерăсем йышăнмалла. Кашни колхозрах лашасем валли çителĕклĕ тата лайăх ута уйăрса хумалла. Пĕтĕ кĕсресем хăм пăрахни ан пултăр тесе, вĕсемпе йывăр ĕçре усă курма чармалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç ăнăçлă пулса пытăр тесен, выльăх фермисенче кадрсем çителĕклĕ пулни, вĕсем хăйсен ĕçне юратса туса пыни кирлĕ. Çавăнпа та колхоз фермисенче ĕçлеме пултаруллă колхозниксене уйăрмалла.

Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма мĕнле хатĕрленнине государство енчен тĕрĕслес ĕç пуçланнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Анчах та халĕ тĕрĕслӳ çителĕклĕ хăвăртлăхсемпе пырать теме çук-ха. Çак ĕçе тума уйăрнă комиссисен хăйсен ĕçне вăйлатмалла та выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕç мĕнле пынине кашни колхозрах тата çак кунсенчех тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла, палăрнă кăлтăксене çийĕнчех пĕтермелле.

Ирĕке кăларнă Ригăри митинг

Октябрĕн 25-мĕшĕнче Рига хулинче йышлă çынлă митинг пулса иртнĕ. Митингра Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Калнберзин юлташ, Латви ССР Совнаркомĕн председателĕ Лацис юлташ тата рабочисемпе партизансен представителĕсем сăмах тухса каланă. Вĕсем Латви халăхне нимĕç пусмăрĕнчен ирĕке кăларнăшăн Хĕрлĕ Çара тата Сталин юлташа хĕрӳллĕн тав тунă.

Совет Латвийĕн столицине ирĕке кăларнă çарсен ячĕпе арми генералĕ Масленников сăмах тухса каланă.

Митингра пулнă çынсем пысăк çĕкленӳпе Сталин юлташ патне салам янă. (ТАСС).

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейи

Икĕ кунхи итогсем

Республикăра укçапа япаласен лотерейин билечĕсене икĕ кун хушшинче 32.264 пин тенкĕлĕх сутнă. Билет укçине 15.000 пин тенкĕ ытла пухса, перекет кассисене хывнă. Лотерея билечĕсене сарасси Октябрьски, Çĕмĕрле, Вăрмар районĕсенче лайăх пырать. Вăл районсенче билетсене сарнипе пĕрлех, колхозниксемпе единоличниксенчен билет укçине те пухса пĕтернĕ. Канашпа Шупашкар хулисенче, Тăвай, Чурачăк, Муркаш тата Канаш районĕсенче те билет сарасси хăвăрт иртсе пырать. Асăннă районсем çак ĕçе çывăх кунсенчех вĕçлесе çитерме пултараççĕ.

Нумай колхозниксем лотерея билечĕсене пиншер тенкĕлĕх туянаççĕ. Çапла, Çĕнтер районĕнчи «Будильник» колхоз председателĕ А. Нестеров юлташ 12.000 тенкĕлĕх туянса, укçине çийĕнчех тӳленĕ. Çав районри «Первое мая» колхоз председателĕ А. Ямайкин юлташ 10.000 тенкĕлĕх туяннă. Кун пек примерсем нумай кăтартма пулать.

Лотерея билечĕсене сарасси пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать пулин те, финанс работникĕсен çак ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанса тăма юрамасть. Вĕсен, партипе совет тата комсомолпа профсоюз организацийĕсем пулăшнипе, агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатмалла, ĕççыннисен активлăхне çĕклесе пымалла. Лотерея билечĕсене сарнипе пĕрлех, билет укçине пухассине те хăвăртлатмалла.

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче

Шупашкарти чылай предприятисемпе учрежденисенче лотерея билечĕсене сарас ĕçе вĕçлеççĕ ĕнтĕ. Çак ĕç нумай çĕрте пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать.

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри нумай рабочисемпе работницăсем тата служащисем лотерея билечĕсене уйăхри ĕç укçин 24 процентĕнчен ытларах çырăнса илнĕ. Давыдова начальник пулса ĕçлекен цехри Крепнева юлташ ертсе пыракан сменăри рабочисем лотерея билечĕсене уйăхри ĕç укçин 25 проценчĕ чухлĕ çырăннă. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра та паха тĕслĕхсем сахал мар. Унта стахановецсем Суриппа, Назаров, слесарь Раев, шофер Романов тата ытти чылай юлташсем лотерея билечĕсене уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнса илнĕ.

Медицина службин майорĕ Жаркова юлташ начальник пулса ĕçлекен госпитальте, ачасен сачĕсенче, промысла кооперации артелĕсенче те лотерея билечĕсене хăвăрттăн сараççĕ. Лотерея билечĕсене сарасси совет тылĕнчи ĕççыннисен патриотизмне кăтартса паракан демонстраци пулса тăчĕ.

Лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех тӳлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Предприятисемпе учрежденисенче те, колхозсенче те укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене сарасси пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать. Паянхи куна лотерея билечĕсене пĕтĕмпе 1.673 пин тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 1.621 пин тенкĕлĕх, рабочисемпе служащисем хушшинче 50 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă.

Колхозниксем тата нумай рабочисемпе служащисем билетсен укçине çийĕнчех тӳлеççĕ. Колхозниксем 1.621 пин тенкĕ, рабочисем 21 пин тенкĕ тӳленĕ.

Лотерея билечĕсене сарасси Наратчаккинчи «Красное Сормово», Сталин ячĕпе тăракан, «Молния» тата ытти чылай колхозсенче лайăх иртнĕ. Вĕсем билетсен укçине те çийĕнчех тӳленĕ.

Нумай колхозниксемпе колхозницăсем, Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ сехетне çывхартма пулăшас тесе, лотерея билечĕсене темиçе пиншер тенкĕлĕх туянаççĕ. «Красное Сормово» колхоз председателĕ П. Сергеева юлташ лотерея билечĕсене 5.000 тенкĕлĕх, «Культура» колхоз председателĕ Мельничук 4.000 тенкĕлĕх, «Молния» колхозри ферма заведующийĕ Борисова, «Красное Сормово» колхоз счетовочĕ Смирнов, Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Чурмаков юлташсем 3000-шер тенкĕлĕх туяннă. Пиншер тенкĕлĕх е ытларах илекенсем вуншарăн шутланаççĕ.

РУМЯНЦЕВ.

Хĕрлĕ Çар валли çĕнтерӳ хĕçпăшалĕ тума

ИШЛЕЙ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Мухтавлă Хĕрлĕ Çар Хĕвелтухăç Пруссие çĕмĕрсе кĕни çинчен пĕлтернине колхозниксемпе колхозницăсем тулли кăмăлпа саванса кĕтсе илчĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çара колхоз производствинче хастарлăн ĕçленипе тата Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тума хăйсем перекетленĕ укçа-тенке панипе саламлаççĕ.

Нумай колхозниксемпе колхозницăсем укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене 1000-шер тенкĕлĕх туянаççĕ. Çапла «МОПР» колхоз председателĕ Боярский юлташ 2.000 тенкĕлĕх, колхозник Александров 1.500 тенкĕлĕх, бригадир Иванова, ферма заведующийĕ Анохина, бригадир Васильев, колхозник Петров юлташсем 1000-шер тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тӳлерĕç. Çак колхоз членĕсем лотерея билечĕсене пĕтĕмпе 25.000 тенкĕлĕх туянчĕç.

Лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе «Большевик», «Парижская Коммуна», Папанин ячĕпе тăракан колхозсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем лотерея билечĕсен укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. Анчах, районĕпе илсен, лотерея укçине пухасси çителĕксĕр пырать-ха. Лотерея билечĕсене пĕтĕмпе 1.300 пин тенкĕлĕх сарнă пулсан, ку таранччен 569 пин тенкине кăна пухнă. Финанс работникĕсен лотерея укçине пухас тĕллĕшпе çине тăрса ĕçлемелле.

Г. ВОЛКОВ.

Лотерея билечĕсен укçине çийĕнчех пухмалла

КӲКЕÇ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра лотерея билечĕсене сарасси хăвăрттăн та ăнăçлăн иртсе пырать. Икĕ кун хушшинчех 1.800 пин тенкĕлĕх сарнă. «Память Ленина», Молотов ячĕпе тăракан, «Стрела» тата ытти чылай колхозсем билетсен укçине çийĕнчех тӳленĕ. Анчах та пĕтĕмĕшпе илсен, укçа пухасси сӳрĕккĕн пырать-ха. Паянхи куна пурĕ 775 пин тенкĕ кăна пухнă. Ку енĕпе тимлĕнрех ĕçлесе, билетсен укçине кĕске вăхăтрах пухса çитермелле тăвас пулать.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа

Хисеплĕ Иосиф Виссарионович!

Чăваш АССР-ĕнчи Канаш хулинчи ĕççыннисем, Хĕрлĕ Çар паттăррăн наступлени туса пынипе хавхаланса тата фашистла ирĕçсене çĕнтерес кунсене çывхартас шутпа, Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума хăйсен перекечĕсенчен 801.018 тенкĕ укçа тата государство заемĕсен облигацийĕсене 81.880 тенкĕлĕх пухса пачĕç. Унсăр пусне, фронтовиксен ачисене пулăшмалли фонда 95.747 тенкĕ пачĕç. Çапла вара пĕтĕмпе 896.765 тенкĕ пухса пачĕç. Укçа пухасси малалла пырать.

Пирĕн ĕçукçине пуç машинăсем ылханлă захватчиксене пĕрлех кӳччĕр.

Сире, хисеплĕ çулпуçа тата Хĕрлĕ Çара пирĕн ĕçлесе пурăнма пылак сывлăхпа пыннă сунатпăр.

Канаш горсоветĕн исполком председателĕ КИЗИЛОВ.

ВКП(б) Канаш горкомĕн секретарĕ НИКИТИН.

Чăваш АССР-ĕ, Канаш Горсоветĕ исполкомĕн председательне Кизилов юлташа ВКП(б) горкомĕн секретарьне Никитин юлташа

Канаш хулинчи ĕççыннисене, Хĕрлĕ Çар валли боевой машинăсем тума 801.018 тенкĕ укçа, 81.380 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем тата фронтовиксен ачисене пулăшмалли фонда хывма 95.747 тенкĕ укçа пухнăскерсене, манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Арми генералне К. А. МЕРЕЦКОВА çар званийĕ — Совет Союзĕн Маршалĕ ятне парасси çинчен

Арми генералне Кирилл Афанасьевич Мерецкова çар званийĕ — Совет Союзĕн Маршалĕ ятне парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕ.

И. Е. Петрова тата М. А. Пуркаева çар званийĕ — арми генералĕ ятне парасси çинчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать: СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званине — арми генералĕ ятне çаксене парас:

Иван Ефимович Петрова

Максим Алексеевич Пуркаева.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. СТАЛИН.

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ Я. ЧАДАЕВ.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕ.

АЧАСЕНЕ УЯВРА ПАМА 48.000 ПАРНЕ ХАТĔРЛЕНĔ

Куйбышев хулинчи комсомолецсем фронтовиксен ачисене уявра пама хăйсен укçипе 48.000 парне хатĕрленĕ.

Пакетсене шоколад, конфетсем, мăйăрсем, печени хунă. Октябрь уявĕнче вăл парнесене ачасене шкулсенче, ача çуртĕсенче, ача сачĕсенче тата яслисенче параççĕ. Комсомолецсем, фронтовиксен хваттерĕсене пырса, пĕчĕк ачасене парнесем параççĕ.

Заводсемпе фабрикăсенче ĕçлекен рабочисен коллективĕсем фронтовиксен ачисене Октябрь уявĕнче пама темиçе вунă пин парне хатĕрлеççĕ. (ТАСС).

80 миллион ĕçкунĕ

ПИОНЕРСЕМПЕ ШКУЛ АЧИСЕН ХИРТИ СТАХАНОВЛА ĔÇĔ

Кăçал колхозсемпе совхозсен хирĕсенче пионерсемпе шкул ачисем 4 миллион çын ытла ĕçленĕ. Вĕсем 80 миллион ĕçкунне яхăн ĕçлесе тунă, 12 миллион тенкĕ укçа ĕçлесе илнĕ.

Хирти ĕçсенче уйрăмах çаксем палăрнă: Узбек ССР-ĕнчи пионерсемпе шкул ачисем, вĕсем 11,5 миллион ĕçкунĕ ĕçлесе тунă; Украина ССР-ĕнчи пионерсемпе шкул ачисем, вĕсем 6 миллион ĕçкунĕ ытла ĕçлесе тунă; унтан тата Мускав, Ленинград, Свердловск, Горький, Челябинск хулисенчи шкул ачисем.

Пионерсемпе шкул ачисем мĕнле ĕçленине пăхса тухнă хыççăн 1944 çулта ялхуçалăх ĕçĕсенче уйрăмах палăрнă шкулсене куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавсем тата укçан паракан премисем параççĕ. (ТАСС).

ЛЬВОВРИ УНИВЕРСИТЕТРА ВĔРЕНТМЕ ПУÇЛАНĂ

Украинăри чи авалхи аслă шкулсенчен пĕринче — Львоври университетра — вĕрентме пуçланă. Студентсем хушшинче Отечественнăй вăрçăра пулнă çынсем нумай.

Факультетсенче саккăрăшĕнче те наукăпа тĕпчев ĕçĕсем пуçланса кайнă. Çынсене заочнăй вĕрентекен пай ĕçлет. Çамрăксене университета кĕме хатĕрлекен курс уçнă, унта пĕр çул вĕренмелле. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 26-мĕшĕнче КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем çаплах малалла тапăнса пынă, ПЕТСАМО (ПЕЧЕНГА) облаçĕнчи ВАНХАТАЛВИКЮЛЯ, КЕСКИТАЛО, ХЕЙСКАРИ, МЕНИККО, ПИТКАЯРВИ, ХЕЙХЕНЬЯРВИ ялĕсене туртса илнĕ.

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн çарсем, вăйлă хирĕç тăма пуçланă тăшманпа хытă çапăçса, ШВИРГАЛЛЕН, АМАЛЧЕНХОФ, ГУДДИН, ГРЮНВАЙТШЕН ятлă вăйлă çирĕплетнĕ пунктсене туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем октябрĕн 26-мĕшĕнче Чехословаки республикин çĕрĕнче Карпат леш енчи Украинăн промышленность центрне МУКАЧЕВО хулине туртса илнĕ. МУКАЧЕВО хули вăл çулйĕрсен паха узелĕ тата Карпат тăвĕсен кăнтăр енчи тăшман оборонин тĕреклетнĕ пункчĕ пулнă. Фронт çарĕсем çавăн пекех тата Чехословаки çĕрĕнче халăх пурăнакан ытти 600 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВЕЛЬКЕ, БЕРЕЗНЕ, ЧОРНОГОЛОВО, СМЕРЕКОВА, ТУРИЦА, ТУРЬЯН РЕМЕТЫ, ТУРЬЯ ПАСИКА, ПОРОШКОВ, НИЖНЯЯ ГРАБОВНИЦА, КЛЮЧАРКА, РОМОЧЕВИЦА, ДОРОБРАТОВО, МАКАРЕВО, КИВЯЖД, САЛАНК, ВЕРБОВЕЦ, ВЫЛОК ятлă пысăк ялсем тата ВЕЛЬКЕ БЕРЕЗНЕ, ЧИНАДИЕВО, ПОДГОРЯНЫ, СЕВЛЮШ, ВЫЛОК ятлă чугун çул станцийĕсем.

Октябрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшне çитиччен наступлени туса пынă вăхăтра УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем тăшманăн 11.230 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: тĕрлĕ калибрлă тупăсем—73, минометсем—53, пулеметсем—372, винтовкăсем пе автоматсем—5.000 ытла, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем — 47.

САТУ-МАРЕ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, Венгри çĕрĕнче халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — УСЦА, СОНКАД, БОТПАЛАД, ЧАХОЛЧ, МАЙТИЩ, ДЬЮ-ДЬЕ, ЧЕНГЕР, ПОРЧАЛМА, ТИОКОД, ФАБИАНХАЗА, ВАЛЛАЙ ятлă пысăк ялсем тата ГАЧАЛИ, ЯНК, ЧЕНГЕР, ПОРЧАЛМА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Çурçĕр Трансильвани çĕрĕнче пынă çапăçусем вăхăтĕнче октябрĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем тăшманăн 6.700 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕнче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 83 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 37 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Карели фрончĕн çарĕсем çаплах наступлени туса пынă, темиçе ял туртса илнĕ. Заполярьере пирĕн боецсем, сержантсем тата офицерсем питех те хастарлăн та паттăррăн çапăçаççĕ. Нимĕç çарĕсем хирĕç тăнисĕр пуçне, кашни утăмрах унти çĕршывăн питех те йывăр условийĕсене çĕнтерме тивет. Совет чаçĕсем çулсăр вырăнсенче малалла каяççĕ, сопкăсем, шурлăхсем урлă каçа-каçа кайса, тăшмана каялла хăваласçĕ, гитлеровецсене пĕтерсе пыраççĕ. Паян Питкаярви ялĕшĕн уйрăмах вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшман малтанах хатĕрлесе хунă позицисенче çирĕпленсе ларнă та хытă хирĕç тăрса çапăçнă. Тыткăна лекнĕ салтаксем каласа кăтартнă тăрăх, нимĕç çарĕсем çакăн пек приказ илнĕ: темĕн чухлĕ вăй пĕтмелле пулсан та, Питкаярви ятлă тĕреклетнĕ пункта тата çав районри пĕртен-пĕр шоссе çулне аларан ямалла мар. Совет чаçĕсем, тăшман хирĕç персе тănине çĕнтерсе, çав тери хăвăрт пырса çапса, тăшмана сирсе янă та Питкаярви ялне туртса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ темиçе опорнăй пунктне туртса илнĕ. Нимĕçсем татти-сыпписĕр çĕнĕ чаçсем илсе пыраççĕ, нумай вăхăтлăха тунă оборона сооруженийĕсемпе усă курса, хăйсен пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене контратакăна кĕрте-кĕрте яраççĕ. Чылай участоксенче алă вĕççĕн тытăçса хаяррăн кĕрешме лекнĕ. Совет артиллерисчĕсемпе пехотинецĕсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă. Кун каçиччен 2.800 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 39 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 20 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление çаплах вăйлатса пынă. Пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, Карпат тăвĕсен кăнтăр енĕпе малалла куçса пынă, чехословаксен Мукачево хулине пырса кĕмелли çулсем çине тухнă. Тăшман ку хулана хăйĕн оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пункчĕ туса хунă. Çав пункт Чехословакин вăтаçĕрти районĕсене каякан çулйĕрсене хӳтĕлесе тăрать. Хулана пырса кĕмелли вырăнсенче Карпат тăвĕсен кăнтăр юпписенче гитлеровецсем укрепленисем нумай туса тултарнă. Татăклă çапăçса, совет çарĕсем тăшман оборонине йĕркерен кăларнă. Пирĕн çамăллăн куçса çӳрекен отрядсем нимĕçсен укрепленийĕсенчен аякран иртсе кайнă та вĕсене пĕр-пĕринчен татса уйăрнă, вĕсен хушшинчи çыхăнăва пĕтерсе тăкнă. Мукачево патнелле Хуста хулинчен наступлени туса пыракан совет чаçĕсем чылай ялсенчи нимĕç гарнизонĕсене аркатса тăкнă, тыткăна нумай илнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, совет боецĕсем Мукачево хулине темиçе тĕлтен вăркăнса кĕрсе кайнă. Мукачево хулин урамĕсенче çĕрĕпех вăйлă çапăçу пынă. Паян ирхине пирĕн çарсем Карпат леш енчи Украинăн промышленность центрне Мукачево хулине пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ.

* * *

Сату-Маре хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, Трансильванне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатса пĕтерпĕ хыççăн, Венгри çĕрне хĕвелтухăç енчен кĕрсе кайнă. Пĕр соединени чаçĕсем, Совешул шывĕ тăрăх наступлени туса пырса, 15 километр малалла кайнă та, тăшманпа çапăçа-çапăçа, халăх пурăнакан чылай пунктсене туртса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсен танкĕсемпе пехоти контратака пуçласа янă. Пирĕн çарсем тăшман контратакине сирсе янă та нимĕçсене каялла хăваласа янă, 900 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Совет артиллерийĕ тăшманăн 10 танкĕпе 12 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ.

Сату-Маре хулине туртса илнĕ чухне пирĕн çарсем нимĕçсенчен 20 тупă, 46 паровоз, 4 чугун çул эшелонĕ тата, унсăр пуçне, 1.042 вагон, çар хатĕрĕсем, 3 боеприпас склачĕ тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕ Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен вицĕ хурал карапне, хăвăрт çӳрекен 5 десант баржине, пĕр тральщикне, пĕр хурал катерне тата 2 мотоботне шыва путарнă.

Çурçĕр Норвегири Варде портĕнче пирĕн летчиксем нимĕç салтакĕсем ларса пыракан парома, икĕ мотобота тата ытти темиçе пĕчĕк суднăна шыва путарнă.

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Укерчĕк çинче: Шупашкарти ача кухнинче ĕçлекен сестра Е. Я. Юзеева юлташ. Ача кухнинче вăл 25 çул ытла ĕçлет. Ĕçе яланах кăтартуллă туса пынăшăн Е. Я. Юзеева юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

Н. ДАНИЛОВ фотоукерчĕкĕ.

Вунă уйăхри плана срокчен тултарнă

Çĕмĕрле комбиначĕн коллективĕ уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăннă чухне кăçалхи 10 уйăхри плана октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах панăччĕ. Завод коллективĕ хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртрĕ, 10 уйăхри плана октябрĕн 20-мĕшĕнче тултарчĕ. Халĕ завод планран иртгерсе продукци кăларать.

Комбинатри пур цехсенче те уяв умĕнхи ăмăртура мала тухассишĕн пыракан кĕрешӳ кунран кунах вăйланса пырать. Пĕр пек профессипе ĕçлекенсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ, цехпа цех, бригадăпа бригада ăмăртса ĕçлеççĕ. Нумай рабочисем куллен çĕнĕ çитĕнӳсем тăваççĕ. Новохатный юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри стахановецсем Серов, Хрящев, Михеев юлташсем октябрĕн малтанхи 20 кунĕ хушшинче тăватшар норма ытла тултарнă. Посадинпа Щеглов тата Ломтев юлташсем кунсеренех 7-шер норма таран тултараççĕ.

А. КАРТАШОВА.

Ĕç вăйне халех çителĕклĕ мобилизацилемелле

ИЕПРЕÇ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Юлашки вăхăтра Шупашкар районĕнчен вăрманта ĕçлеме колхозниксем нумай килчĕç. Вĕсем, лучковăй пăчкăпа ĕçлесе, нормăна кĕске вăхăтрах иртгерсе тултарма тытăнчĕç. Çапла, «Хучахмат» колхоз членĕ Ефимова юлташ ертсе пыракан бригада (унта 3 çын) кулленех 13—15 кубометр вутă касса хатĕрленĕ. Çавăн пекех «Красное знамя» колхоз членĕ Хромова юлташ ертсе пыракан бригада та нормăна пĕрмаях иртгерсе тултарать.

Вăрманта ĕçлекенсенчен 80 проценчĕ таран лучковăй пăчкăсемпе ĕçлеççĕ. Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăрту договорĕсем тунă. Çапла вĕсем октябрьти плана срокчен пурнăçа кĕртсе çитерессишĕн кĕрешеççĕ. Стахановлă ĕçлекенсен йышĕ пĕрмаях ӳссе пырать.

Çав вăхăтрах Çĕрпӳ районĕнчи партипе совет организацийĕсем вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ мобилизацилес тĕлĕшпе кирлĕ пек тăрăшмаççĕ-ха. Вăл районăн октябрь уйăхĕнче чугун çул транспорчĕ валли 3.000 кубометр хатĕрлесе турттарса кăлармалла. Ку таранччен 1.000 кубометра яхăн кăна хатĕрленĕ-ха. Плана вăхăтра тултарма халех кирлĕ таран ĕç вăйĕ мобилизацилес пулать.

Вагонсем юсакан пункт коллективĕн çитĕнĕвĕ

КАНАШ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Станцири вагонсем юсакан пункт коллективĕ, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕçлесе, октябрьти плана 20 кун хушшинчех тултарнă. Унта уйрăмăнах кровельщик Васильев, платник Алексеев, слесарь Андреев, тимĕрçĕ Федин юлташсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна 250-шар процент тултарса пыраççĕ. Çавăн пекех вагонсене тĕрĕслекен Павловпа Орлов юлташсем те хăйсен ĕçне кунсеренех лайăхлатса пыраççĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Малта пыракансем парти ретне кĕреççĕ

Пирĕн Сĕнтĕр районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, вăрçă кунĕсенчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, тырпула вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртрĕç, государствăна тырă памалли плана ытлашшипех тултарчĕç. Промыслапа инвалидсен артелĕсенче ĕçлекенсем те нумайрах продукци туса кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, рабочисемпе служащисем большевиксен партийĕ тавра таччăнрах пĕтĕçрĕç. Çавна парторганизацисен йышĕ ӳсни те çирĕплетсе парать.

Районри парторганизаци кăçал 10 уйăх хушшинче парти ретне пĕтĕмпе 109 çынна илнĕ. Парти ретне илес тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ çумĕнчи тата Ювановăри, Шашкарти, Янăмри, Карачри пуçламăш парторганизацисем тăрăшса ĕçлерĕç. Партие çĕнĕрен илнĕ юлташсем пурте чи лайăх, малта пыракан, парти ĕçне чĕререн юратакан юлташсем пулса тăраççĕ.

Парти райкомĕ нумаях пулмасть парти ретне комсомолăн Шашкар ялсоветĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш организацийĕн секретарьне Кабуркин юлташа илчĕ. Кабуркин юлташ Отечественнăй вăрçă инвалиçĕ, колхозри транспорт бригадин бригадирĕ. Унăн бригади государствăн хатĕрлев пунктне тырă турттарнă çĕрте кулленхи нормăна 150—200 процент тултарса пынă. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тырă парса татса, çитес çулшăн та 720 пăт панă. Вăл ертсе пынипе комсомол организацийĕ аван ĕçлет, пухусем вăхăтра пулса пыраççĕ, кăçал 5 çамрăка комсомола илнĕ. Вĕсем пурте агитаторсем, колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ.

«Сеялка» колхоз иртнĕ çулсенче кая юлса пынă. Кăçал, председатель пулса ĕçлеме Пальков юлташа суйланă хыççăн колхоз малти рете тухрĕ. Уйăран тырпул пухса кĕртме пуçлас умĕн Пальков юлташ партие кĕме заявлени пачĕ, унта вăл колхоза малти вырăна кăларма пулчĕ. Хăйĕн сăмахне вăл чыслăн пурнăçларĕ. Колхоз, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 265 гектар çинчи тырпула пуçтарса кĕртсе, аван çапса пĕтерчĕ. Вăл государство умĕнчи обязательствăсене те пĕтĕмпех срокчен пурнăçларĕ, килес çулшăн 665 пăт тырă пачĕ. Колхоз малти рете тухса, районри тата республикăри Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕ.

Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхозри ВКП(б) членĕн кандидачĕ Яковлев юлташ ертсе пыракан бригада, тырпула пуринчен малтан пуçтарса кĕртсе, ăнăçлăн аван çапса пĕтерчĕ, тухăçлă тырпул туса илчĕ. Унăн бригади гектартан 875 пăтран кая мар çĕрулми пуçтарса кĕртнĕ. Бригадăри колхозниксем пурте хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх ĕçкунĕ пуçне 16-шар килограмран кая мар çĕрулми илеççĕ. Яковлев юлташа çак кунсенче ВКП(б) членне илнĕ.

Анчах парти ретне илес ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Парти ретне илнисен йышăнче рабочисем сахал. Районра 8 артель тата пир-авăр тĕртекен фабрика пур. Вĕсенче стахановецсем те сахал мар. Апла пулин те 10 уйăх хушшинче рабочисене 4 çынна кăна парти ретне илнĕ. Уйрăмăнах ку енĕпе пир-авăр фабрикинче сӳрĕк ĕçлеççĕ.

Парти ретне ӳстеренипе пĕрлех, çамрăк коммунистсене воспитани парасси çинчен те манмалла мар. Вĕсене партин организацинлĕ принципĕсемпе паллаштармалла. Устава тата программăна тĕплĕн вĕрентмелле.

П. ИСАЕВ.
ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн инструкторĕ.

Ачасем урамра, классенче çил вĕрет

Етĕрне районĕнчи Кăташри пуçламăш шкулта тивĕçлĕ йĕрке çуккине шкула кĕричченех куратăн. Тахçан ĕлĕк-авал пуртă-сава курнă алăксемпе шкул картисем кĕрхи çилпе енчен-енне силленсе лараççĕ. Военрук пĕр класри ачасемпе заняти иртгерет, тепĕр класри ачасем урамра чупса çӳреççĕ. Шкул заведующийĕн пӳлĕмĕнче, учительски тенĕ çĕрте, пĕр сĕтел, халь йăтăнса анас пек, ларать. Пĕр кĕтессе ик уралла пукан сĕвентернĕ, тепĕр çĕрте юлашки тенкелĕ урисене çӳлелле тăратса выртать. Тахçан, такам шуратса панă стенасем çумĕнчи хучĕсем çĕтĕлсе пĕтнĕ. Чӳрече рамисем те аран-аран тытăнкаласа тăраççĕ, кантăкĕсем çĕмрĕк. Ларкалвсан урамра чупса çӳрекен ачасене кам вĕрентнине те пĕлтĕмĕр. Вĕсем — пĕрремĕш класра вĕренекенсем, вĕсене шкул заведующийĕ А. Ижеева хăй вĕрентет иккен.

Классенче те çавах. Икĕ пăта çапса юсамалли алăксем те аран усăлса хупăнаççĕ, кантăкĕсене лартман, доскисене сăрламан.

— Юсамаллине пĕлетпĕр те, укçа çук, мастерсем те кирлĕ çав, — терĕ Ижеева.

Тĕрĕс мар. Кăташра ку япаласене тума пултаракан мастерсем тупма пулать. Укçа та пур. Айăпĕ пĕтĕмпех хăйсенче. Шкул çуртне юсама бюджетпа пăхнă укçапа иртнĕ çул та, кăçал та нимĕн чухлĕ те усă курман.

Кăçал шкула пулăшас шутпа колхоз çур гектар тулă акса, çур гектар çĕрулми лартса панă. Çĕрулмине кăларса шултăраххине пуçтарса илнĕ те юлашки халĕ те уйрах выртать вара. Вырса кĕртнĕ тулла колхозниксем çапса парасса шанаççĕ.

Ачасене пĕлӳпе воспитани парас ĕçе йĕркелессишĕн те тăрăшмаççĕ. Кунта занятисене хăш чухне сакăр сехет иртсенех, тепĕр чухне 10 сехетре кăна пуçлаççĕ. Шкулăн пĕр çуртĕнче сехет те çук. Урoксене пуçласа вĕçлесси чуххăмăн пулса иртет. Пионерсемпе ĕçлемеççĕ. Стена хаçачĕсем кăлармаççĕ. Занятисем хыççăнах шкулне питĕрсе каяççĕ те вара тепĕр кунччен унта нимĕнле ĕç те пулмасть. Учительсем шкул ачисен ашшĕ-амăшĕсене хăçан пухса каласнине астумаççĕ те, шкул ачисен пухăвĕсем те пулмаççĕ. Çаксене пулах ачасем шкула çӳрессине те, вĕренӳ пахалăхĕ те, дисциплини те питĕ япăх. Пĕр кунхине 4-мĕш класри 18 ачаран тăххăрĕшĕ шкула пыман. Вĕсенчен хăшпĕрисем тăваттăмĕш урокра тин шкула çитеççĕ. Класран учительсенчен ыйтмасăрах туха-туха кĕреççĕ.

Пурне те вĕрентмелли закона пурнăçлас ĕç япăх пырать. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче икĕ ачана, тăваттăмĕш тата иккĕмĕш класра вĕренекенскерсене, шкултан кăларса янă. Вĕсем халĕ те шкул тулашĕнче. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче вĕренме пăрахнисене те нумайĕшне шкула явăçтарман. Кĕркуннехи испытанисене хăварнă ачасемпе çулла пачах ĕçлемен, испытанисем те ирттермен. Çапла вара вĕсенчен хăшне-пĕрне çав класрах иккĕмĕш çул вĕренме хăварнă, теприсене испытанисем тыттармасăрах çичĕ çул вĕренмелли шкула ăсатнă.

Шкулти Р. Петровăпа Е. Иванова учительницăсем педучилищĕре вĕренмен. Вĕсене методика пулăшăвĕ кирлĕ. Анчах шкул заведующийĕ Ижеева вĕсене методика енчен пулăшмасть. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче Ижеева Р. Петрова урокĕнче пĕтĕмпе те икĕ хутчен кăна пулнă. Унта та кирлĕ пулăшу паман. Пĕр-пĕрне пулăшас, ĕçре пĕр-пĕрин лайăх опычĕсемпе усă курас вырăнне, вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштермесĕр, харкашса пурăнаççĕ. Етĕрне райçутĕç пайĕ те (заведующийĕ Мартяшев) çав фактсене шута илнисĕр пуçне нимĕн те тумасть. Районри çутĕç пайĕ Ижеева ĕçе юратманни çинчен пĕлмест мар. Анчах вăл шкула вĕренӳпе воспитани ĕçне кирлĕ пек йĕркелес, ачасенчен хамăрăн тăван çĕршыва чĕререн юратакан, çирĕп пĕлӳллĕ те пултаруллă çынсем пăхса ӳстерес ĕçре пачах пулăшмасть. Райçутĕç пайĕн инструкторĕсем ку шкулта икĕ çул хушшинче пĕрре те пулман. Комсомол райкомĕн работникĕсем те çав йĕркесĕрлĕхсем пирки хăйсен блок-ночĕсем çине çырса тултарнипех лăпланса лараççĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

ЯЛТИ ÇАМРАКСЕН ШКУЛĔСЕНЧЕ ВĔРЕНТМЕ ПУÇЛАС УМĔН

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче ялти çамрăксен шкулĕсенче вĕрентме пуçлаççĕ. Темиçе çĕр пин арçын ачапа хĕрача ялхуçалăхĕнче ĕçлеме пăрахмасăрах малалла вĕренĕç.

Хальхи вăхăтра облаçсемпе крайсенче тата республикăсенче кăçхи шкулсене усăма хатĕрленсе çитеççĕ. (ТАСС).

Государствăна табак параççĕ

ИЕПРЕÇ. «Коминтерн» колхоз çулран çул государствăна нумай табак туса парать. Иртнĕ çул колхоз табак памалли плана 160 процент тултарнă. Табак лартса тăвас тĕлĕшпе кунта уйрăм бригада ĕçлет. Бригадăна ватă колхозник Я. Чугунов ертсе пырать.

Табак ӳстерсе илес ĕçре А. Тарасова, И. Филиппова, А. Куракова, К. Питукова колхозницăсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Бригадир вĕсене кашни кун мĕн тумаллине вĕрентсе пырать. Кăçалхи çул табак иртнĕ çулхинчен вăйлăрах ӳсрĕ.

Планран ирттерсе государствăна пама Чугунов ертсе пыракан бригада 120 пăт ытла табак типĕтсе, çыхса хунă. Çак кунсенчех ăна хатĕрлев пунктне леçсе параççĕ.

А. АНТОНОВ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Укерчĕк çинче: Пирĕн чаплă земляк старши сержант И. Варламов. Вăл танкăн механик-водителĕ. Совет Эстонине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенчен пĕринче вăл нимĕçсен 6 салтакĕпе 2 офицерне тыткăна илнĕ.

Вăрçа кайиччен Варламов юлташ Канашри вагонсем юсакан заводра слесарь пулса ĕçленĕ.

С. НОРДШТЕЙН фотоукерчĕкĕ.
(ТАСС фотохроники).

ПИРЕ УЛТАЛАЙМĂН...

(Фронтран килнĕ çыру)

Шывăн икĕ айккипе сапаланса ларакан ялăн сылтăм енче нимĕç çарĕсен малти линийĕ, сулахай енче совет çарĕсен малти линийĕ. Ку вырăнта кунĕн-çĕрĕн, иртен пуçласа мĕн сĕм тĕттĕм пуличченех, пăшал сасси кĕрлесе тăрать. Хăрама ернĕ нимĕçсем пĕрмаях персе тăраççĕ. Эпир канатпăр.

— А, Адольф хăракана ерчĕ иккен, — тесе кулаççĕ пирĕн боецсем.

— Юлташ сержант, — илтĕнчĕ пирĕнтен сылтăм енчи наблюдателĕн сасси, —шыв хĕррине пĕр ватă нимĕç анать!

Эпĕ хăвăртрах автомата тытса нимĕç оборони еннелле пăхрăм. Чăнах та, пĕр ватă нимĕç сылтăм аллине пысăк витре йăтса шыва анать.

— Тем, ку ырра мар, — тесе шутларăм хам ăшăмра, çав вăхăтрах телефон тăрăх взвод командирне пĕлтертĕм.

Ватă нимĕç шыв хĕррине çитиччен 10—15 метр юлсан, тăшман енчен пуçа çĕклейми пулемет шатăртаттарса илчĕ.

Взвод командирĕ мана умра тăракан задачăна ăнлантарчĕ: вăхăта сая ямасăр, ватă нимĕçе тыткăна илмелле.

Эпĕ хампа пĕрле украинец Беспалькăна илтĕм. Пирĕн малти лини çине тăшман пĕрмаях пеме пуçларĕ.

Эпĕ пĕтĕм кĕлеткепе, мĕнпур вăя пухса, шыв хĕрринелле чупрăм, Беспалько—ман хыççăн. Хăлха сывăхĕнченех пульăсем шăхăрса иртеççĕ. Шыв хĕррине çитиччен пĕтĕмпе 10—15 хутчен çĕр çумне лапчăнма лекрĕ.

Эпир вырнаçнă вырăна тăшман тĕкĕнеймест, мĕншĕн тесен эпир айлăмра, ура çине тăрсан та пуля пуç тӳпипе шăхăрса иртет. Нимĕç, эпир айлăмрине пĕлсе, пирĕн çине минăсем сапма пуçларĕ. Акă, умрах мина ухлатса çурăлса, хура тăпрана пирĕн çине сапать. Çур сехет хушшинче нимĕçсем эпир вырнаçнă вырăна 49 мина пăрахрĕç.

— Акă, куратăр-и? — пӳрнипеле кăтартать мана Беспалько. Чăн та, пирĕнтен инçе мар, пĕр 50 метрта, ватă нимĕç снаряд ӳкнĕ вырăнтан хăйĕн пуçне кăгартрĕ. Вăл шанчăксăррăн пур еннелле те пăхса илчĕ те, ура çине тăрса, шарлаттарса юхакан шыв урлă пирĕн енне каçрĕ.

— Мĕншĕн-ха вăл витрене çӳле çĕклесе каçать, — тесе шухăшларăм эпĕ.

Нимĕç, шыв урлă каçсан, каллех йĕри тавралла пăхса илчĕ те хырăм çине выртса витререн спичка коробки евĕрлĕ минăсене çĕр ăшне чавкаласа хума пуçларĕ.

— Нимĕç саперĕ пирĕн алăра пулать,— пĕлтерчĕ Беспалько.

Акă ĕнтĕ вăл пирĕнтен 25—30 метрта. Беспалькăна сылтăм енчен ятăм, хам сулахай енчен хупăрларăм. Эпĕ хырăмпала шуса пырса нимĕç вырнаçнă вырăнтан 3—4 метрта чарăнса тăтăм.

Нимĕç саперĕ мана сисрĕ пулас, хăвăрттăн хыçалалла çаврăнса, мана курчĕ.

— Руки вверх! — терĕм автомата ун çинелле тĕллесе. Капкăна лекнĕ нимĕç, ним тума аптăранипе, витререн револьвер илсе ман çине тĕллерĕ, анчах вăйлă кĕлеткеллĕ Беспалько унăн аллине каялла çавăрса тытрĕ. Эпĕ хăвăртрах вăл ан кăшкăртăр тесе унăн çăварне курăк чикрĕм.

— Ну, ватă нимĕç епле пек! — терĕм ăна чăвашла.

— Война добре, що не балакаешь — терĕ Беспалько. Ватă нимĕç ăнланайманнипе пуçне суллакаларĕ. Эпĕ унăн çумĕнче мĕн пуррине ухтарма пуçларăм, анчах ун çумĕнче нимĕн те çук.

Çав вăхăтра, снаряд лексе йăтăнса аннă пӳрт хыçĕнчен пĕр чипер хĕр корзинкăпала чупса тухрĕ.

— Ой! ан тивĕр манăн аттене,—вырăсла кăшкăрса макăрса чупма пуçларĕ. А хăй сылтăм аллине корзинкăра тытать.

Çав вăхăтрах эпĕ ватă нимĕçе выртма хушрăм, Беспалькăна хĕре хирĕç кайма систертĕм.

— Асăрханулла пул, Беспалько, — терĕм ăна.

Хĕр, Беспалько патне çитиччен 30—35 метр юлсан, граната ывăтрĕ те хăй чул пек çĕр çине выртрĕ.

Анчах Беспалько кун пек хăрушлăхра пĕрре анчах пулса курман, вăл хăвăрт пысăк чул хыçне выртрĕ.

Граната Беспалько çывăхĕнчех ухлатса çурăлчĕ. Эпĕ, хăвăрт пилĕкри чĕнпиçиххине салтса, каялла çыхнă нимĕç аллине пĕр тымар çумне кăкартăм, хам хăвăртрах юлташа пулăшма чупрăм.

Хĕр ман паталла чупма пуçларĕ. Эпĕ автомата çĕклесе темиçе черет кăларса ятăм. Хĕр чул пек йăваланса кайрĕ.

Питех те аван куратăп: хĕртен инçе мар корзина выртать. Эпĕ пĕтĕм вăйпала чупса пырса корзинкăна алла илтĕм.

— А, лекрĕн, чипер хĕр! — тесе кăшкăрса унăн çӳçне-пуçне çавăрса тытрăм. Анчах унăн çӳçĕ каялла тухса килчĕ.

Манăн ума чипер хĕр вырăнне сухаллă нимĕç тухса тăчĕ. Çапла паллашрăм эпĕ çав кун сухаллă чипер хĕрпе.

Анчах та питех те шел пулчĕ, Беспалькăна граната ванчăкĕ кăштах амантрĕ.

Паянхи куна çитсе те пĕтĕм подразделенире çак эпизод çинчен калаçаççĕ.

А. СМИРНОВ.

САПАСУРИ ÇАР.

Чехословаки правительствин Чехословакин ирĕке кăларнă территорийĕнче ĕçлеме килнĕ делегацийĕн пуçлăхĕ калани

ЛЬВОВ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Львова Чехословакин ирĕке кăларнă территорийĕнче ĕçлеме Чехословаки правительствин делегацийĕ килнĕ. Делегацие Чехословаки правительствин уполномоченнăйĕ министр Франтишек Немец господин ертсе пырать. Франтишек Немец господинпа пĕрле çаксем килнĕ: Çар миссийĕн руководителĕ дивизи генералĕ Антонин Нижборский, Чехословакин государство совечĕн членĕсем — Б. Лаушман господин, И. Вало господин, Ф. Углирж господин тата Ф. Гала монсеньер, çавăн пекех тата çав уполномоченнăйăн сотрудникĕсем те килнĕ.

Франтишек Немец господин ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каланă: Петров генералăн паттăр çарĕсем, тăшманпа ăнăçлă çапăçса Чехословакин чылай районĕсене ирĕке кăларчĕç. Нимĕçсене Ясин, Рахов, Дубова тата ытти хуласенчен те хăваласа кăларнă. Халĕ эпир, 5 çула яхăн ытти çĕрте пурăннă хыççăн, хамăр тăван çĕршыва каятпăр. Пирĕн умра тăракан чи çывăхри задачăсем çаксем: вырăнти халăхăн пурнăçĕпе паллашасси, май килнĕ таран граждăнла администрацие йĕркелесе трасси, халăх валли апат-çимĕç тăратас ĕçе йĕркелесе ярасси, пуринчен те ытларах—тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳре Чехословакин ирĕке кăларнă районĕсем Хĕрлĕ Çара мĕнпе пулăшма пултарнине пĕлесси тата çав пулăшăва халех йĕркелесе ярасси пулса тăрать.

Совет Союзĕнчен тухса кайнă май пĕтĕм Чехословаки çĕрĕнчи халăхсен ячĕпе — чехсен, словаксен, Карпатри украинецсен ячĕпе — Совет Союзĕн Маршалне Иосиф Сталина тата Хĕрлĕ Çара пирĕн нумай асап тӳснĕ Чехословакие ирĕке кăларнăшăн хĕрӳллĕн тав тăватăп. Чехословаки халăхĕсем вĕсен хавăтлă кӳрши—Совет Российи — вĕсемшĕн çав тери пысăк тăрăшнине ĕмĕрне те манас çук. Пире тăванла пулăшнăшăн эпир яланах тав тума тивĕçлĕ.

Чехословакие ирĕке кăларас ĕçĕн пуçламĕшне анчах тунă-ха. Малалла çак хуласене: Ужгород, Кошице, Братислава, Брно, Прага хулисене ирĕке кăлармалла. Эпĕ çакна шанатăп: часах Чехословаки хăйĕн территорине нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнине чаплăн уявласа ирттерĕ. Тăванла туслăх, юппа çирĕплетнĕскер, пирĕн икĕ халăха—вырăс-халăхĕпе чех халăхне — пĕрлештерсе тăрать, çав туслăх çирĕпленсе вăйлансах пырĕ, пулас пурнăçра тата вăйлăрах ырлăх парĕ.

Пире ирĕке кăларакана Сталин Маршала—мухтав!

А. Е. Богомолов—Совет Союзĕн Францири посолĕ

ПАРИЖ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Правительстви Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствине йышăнни çинчен пĕлтернĕ чухне Совет Союзĕн Француз Халăхĕн Ирĕклĕх Комитечĕ çумĕнче пулнă представительне А. Е. Богомолова Совет Союзĕн Францири чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ пулма лартасси çинчен те каланăччĕ.

Францин Вăхăтлăх Правительстви А. Е. Богомолăва Совет Союзĕн Францири чрезвычайнăй тата полномочнăй посолĕ пулма лартассипе килĕшнĕ.

ФИНЛЯНДИРЕ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПАÇÇĔ

ХЕЛЬСИНКИ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки кунсенче Финляндире вăрçă преступникĕсене тыта-тыта хупнă.

Официальнăй йĕркепе пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: «Перемири çинчен тунă килĕшӳвĕн 13-мĕш статьи тăрăх, Финлянди вăрçăшăн айăплă çынсене тытса чарас тата вĕсене суд тăвас тĕлĕшпе союзлă державăсемпе килĕшсе ĕçлеме пулнă. Халĕ çав статья тăрăх хăшпĕр çынсене тытса хупнă. Çав çынсем, союзлă державăсем каланă тăрăх, вăрçă вăхăтĕнче, пуринчен те ытларах Хĕвелтухăç Карелире пулнă чухне тунă преступленисемшĕн айăплă. Тыткăна лекнĕ çар çыннисене каялла панă чухне хăшпĕр ĕçсене йĕрлесе тухнă, вара çавсем тăрăх та темиçе çынна, тыткăнра пулнă çар çыннисем айăпланăскерсене, тытса чарнă».

РУМЫНИРЕ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Румынсем вăхăтлăха оккупацилене совет территорийĕнче мирлĕ халăха вĕлерсе, çаратса тата ытти преступленисем туса айăпа кĕнĕ вăрçă преступникĕсенчен 23 çынна, Союзниксен Контроль Комиссийĕ ыйтнă тăрăх, тытса хупнă. Вĕсен шутĕнче аслă вырăнсенче ларнă çынсем чылай: шалти ĕçсен министрĕн заместителĕ жандармери шефĕ пулнă Василиу генерал, граждăнла губернатор пулнă Потяну генерал, румынсен 24-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ Наста генерал, румынсен 21-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ Тренку-Атанас генерал, Одесса хули примарĕн (градоначальникĕн) заместителĕ пулнă [illegible] рашку тата полиципе румынсен оккупаци аппаратĕнче ĕçленĕ ытти чиновниксем те чылай.

Тытса хупнисем хушшинче культура «деятелĕсем» те пур, сăмахран, Рантя профессор, румынсен театрĕн директорĕ Майкап Аурель, Ионескупа Тудореску архитекторсем. Вĕсем хăйсен «культура ĕçĕпе çутта кăларас ĕçне» Совет Украининчи культура учрежденийĕсене çаратса пĕтерес тĕлĕшпе вăйлă палăртнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Гертогенбош хулинче çапăçаççĕ, тăшмана хулан çурçĕр тата хĕвелтухăç пайĕсенчен хăваласа кăларнă. Бокстель хулине илнĕ хыççăн союзниксен çарĕсем хуларан темиçе миля çурçĕр-хĕвеланăçнелле куçнă.

Тăшман çарĕсене «миххе» хупса хунă Шельда шывĕ районĕнче союзниксен çарĕсем Польдертье пункчĕ еннелле кайнă. Союзниксен çарĕсем тăвата кун каярах пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн Фредерик-Хендрик фортне хăварнă пулнă, халь çав форта тăшмантан каллех тытса илнĕ.

Эпиналь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, тăшман вăйлăрах хирĕç тăма пуçланă пирки, союзниксен çарĕсен наступленийĕ вăрахланнă. Йывăр бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем кăнтăрла, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Эссен хулине тата Хомбург хулинчи синтетически горючи заводне тапăннă. Кăнтăрла тĕлĕнчех 1.200 йывăр бомбардировщик ытла, 500 истребителе яхăн хӳтĕлесе пынипе, Гаим хулинчи чугун çул деповне, Гамбург районĕнчи нефть тасатакан завода тата Çурçĕр-хĕвеланăç Германири ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Октябрĕн 23-мĕшĕнче ирхине союзниксен çарĕсем, акăлчансен «Тизер» ятлă çар карапĕпе грексен «Наваринон» миноносецĕ çинче ларса пырса, Эгей тинĕсĕнчи Скопелос утравĕ çине аннă та ăна йышăннă (ку утрав Спорада утравĕнчен çурçĕртерехре).

Италире союзниксен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем, тăшман çаплах хытă хирĕç тăрать пулин те, хуллен, анчах та çине тăрсах малалла куçса пынă. 8-мĕш армин чаçĕсем тăшмана тапăнма Чезена патĕнче тунă укреплениĕсенчен хăвăрт малалла кайнă та, тăшман тăракан вырăна савăлланса кĕрсе кайса. Бевано шывĕ урлă каçнă. Бевано шывĕнчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Форлимпополи хулине йышăннă та Ронко шывĕ çине тухнă.

Грецире партизансен отрячĕсем Ларисса хулине йышăннă. Партизансемпе таччăн çыхăнса кĕрешекен союзниксен çарĕсем çурçĕрелле куçса пыраççĕ.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 400 вĕçев тунă.

Гитлер шайккин пĕр пуçлăхĕ Шепман „нервăсем пăсăлнă пирки“ чирлесе ӳкнĕ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен радиовĕ пĕлтернĕ тăрăх, СА отрячĕсен штабĕн начальникĕ Шепман нервăсем пăсăлнă пирки чирлесе ӳкнĕ. Унччен ăна Гитлер «фольксштурм» ретĕнче тăракан çынсене (Германин шалти çарĕ) вĕрентес ĕçе йĕркелесе яма хушнă пулнă. Тухтăрсем Шепмана унти çанталăк юраман пирки урăх çĕрте пурăнма куçма сĕннĕ.

ФРАНЦИ ХАÇАЧĔСЕМ ИСПАНИРИ ĔÇСЕМ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ПАРИЖ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Популер» тата «Комба» ятлă хаçатсем Испанири ĕçсем çинчен чылай çыраççĕ. «Популер» хаçат хăйĕн Франципе Испани чиккинчи корреспонденчĕ пĕлтернине пичетлет. Пĕлтерӳре çапла çырнă: «Франко Пиреней чиккине 20 дивизие яхăн пухса тăратнă. Испанецсен Леридăри партизансен юхăмĕ 20.000 çынна яхăн пĕрлештерсе тăрать. Çав юхăм кунсеренех вăйланса пырать. 100 пин патриота яхăн кĕрешӳ пуçланас вăхăта тем пекех кĕтсе тăраççĕ. Франкона пуринчен те ытларах хăратса тăракан пункт вăл—Каталони. Çавăнпа та Франко Каталони çине хытă пăхса тăрать. 2-мĕш дивизи ку таранччен Испани Мароккинче тăнă, ăна халĕ Каталоние куçарнă е çак кунсенчех куçарса пĕтерет. Çакăн пек хыпарсем те çӳреççĕ: Мароккăри легионерсене те чылайĕшне Каталоние яраççĕ», теççĕ.

Çав хаçатрах Марсель Биду статьине пичетлесе кăларнă. Биду çапла çырать: республикăлла рабочисем, диктатор режимне кураймаш пирки, Франкона пĕтерсе лартма хатĕр тăраççĕ, тет.

КЕНТЕРБЕРИ АРХИЕПИСКОПĔ ВИЛНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 26-мĕшĕнче Кентербери архиепископĕ вилнĕ. Вăл 63 çулта пулнă.

АНГЛИН ИТАЛИРИ ПОСОЛĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонран çапла пĕлтернĕ: Бразилире Англи посолĕ пулса ĕçленĕ, хальхи вăхăтра Италире верховнăй комиссар пулса ĕçлекен Ноэль Чарлза Англин Римри посолĕ пулма уйăрса лартнă. Италин Лондонри представителĕ пулма Карандини графа уйăрса лартнă.

КĔСКЕН

* Пĕрлешӳллĕ Штатсенче çĕнĕ йывăр транспорт самолечĕ тунă. Вăл 92 тонна таять, 109 пассажир илме, 3.500 миля вĕçсе кайма пултарать, сехетре 288 миля каять.

* Юлашки пилĕк çул хушшинче Англи вăрçă ĕçĕсем валли 23.893 миллион кĕренке стерлинг укçа расходланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех «ПОСЛЕДНЯЯ НОЧЬ» ятлă саслă, илемлĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме пуçлать.

Колхоз пахчи

Аслă Пăла шывĕ Первомайски, Чкаловски, Елчĕк районĕсенчи нумай колхозсен çĕрĕсем урлă юхса тухса, Тутар республикинче Сĕве шывне хутшăнать. Ваттисем калашле, Пăла тăрăх ялсем çип çине тирнĕ шăрçасем пек ларса тухнă. Пăла шывĕн икĕ айккипе çĕршер колхозсем тăкăсланса вырнаçнă. Çулран çулах çуркунне Пăла шывĕ çыранран тухса хăйĕн анлă айлăмне паха юшкăн хăварса çĕре çĕнетет.

— Хуть мĕнле тырă аксан та пысăк тухăçлă çитĕнет, хуть мĕнле пахча-çимĕç те ăнса пулать,—тет «Гвардеец» колхозри пахча-çимĕç туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен бригадир Александр Павлович Заплаткин юлташ. — Анчах,—тет Александр Павлович, — пирĕн чылай колхозсем çак тĕлĕнмелле ырă çĕрпе кирлĕ пек усă курмаççĕ, пахча-çимĕç лартса тумаççĕ.

«Гвардеец» колхоз кăçал 7 гектар çинчен пахча-çимĕç пухса илчĕ. 1,20 гектар çине купăста, 1,65 гектар хăяр, 1,70 гектар сахăр кăшманĕ, ытти лаптăка вара: кишĕр, ыхра, сухан, помидор, вăрлăхлăх пахча-çимĕçсем йышăннă. Заплаткин юлташ бригадин çĕрлаптăкĕ пысăках мар пулнă. Унăн бригадинче пурĕ те 12 çын кăна ĕçленĕ, тĕрĕссипе каласан, ку бригада мар, звено кăна пулнă. Анчах та çак çĕр лаптăкĕ çинчен колхоз сахал мар пахча-çимĕç пухса илнĕ. Ăна çак цифрăсем лайăх кăтартса параççĕ: купăста гектартан 2400 пăт, хăяр 2475 пăт, помидор 654 пăт, кишĕр 2120 пăт, сахăр кăшманĕ 2500 пăт. Колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй июлĕн 20-мĕшĕнчех ĕçлеме пуçланă. Унта кашни кунах пахча-çимĕç кайнă, колхозниксем те кашни кун тенĕ пекех пахчари çимĕçпе усă курнă.

Александр Павлович 60 çултан иртнĕ, вăл хăй ĕмĕрĕнче хура-шур нумай курнă. Вăл тахçан, çамрăк чухне, Саратов облаçĕнче тата ытти вырăнсенче те пулнă.

— Чухăнлăх таçта та илсе çитернĕ, — тет вăл аса илсе. Çакăн пек çӳренĕ чухне вăл сахал çынпа ĕçлесех тухăçлă пахча-çимĕç туса илнине курнă. Кăçал бригада 40.000 тĕп купăста лартнă. Лайăх çимĕç туса илес тесен, икĕ уйăх хушши бригадăн кашни членĕн кулленех пиншер витре шыв йăтмалла пулнă. Паллах, ку йывăр ĕç, анчах пахча-çимĕç шывсăр ӳсмест. Кунта Заплаткин юлташ колхозницăсен ĕçне çăмăллатмалли май тупнă. Пăла çыранне чăнкăлатса тикĕсленĕ. Çыранпа пĕртан тăвата юпа çине 15—20 сантиметрлă икĕ пĕрене хушшине пысăк кустăрма вырнаçтарнă. Вăл кустăрман тул енне витресем çакнă. Кустăрма çаврăннă май унăн аялти витрисем Пăла шывне ăсса çӳлелелле çĕкленеççĕ те, çыранри валашка çине шывне тăкса, каллех аялалла шыв ăсма анаççĕ. Валашка тăрăх шыв пахчаналла юхать, унтан пĕчĕк канавсем тăрăх купăста хăяр тата ытти çимĕçсем патне саланать. Шыв юхса пырайман вырăнсене шăварма, айлăм вырăнсене шыв пухăнмалли лакăмсем тунă, вăл лакăмсенчен вара витрепе йăтса шăварнă. Шыва çырана хăпартмалли кустăрмана колхозра чигирь теççĕ. «Гвардеец» колхозра икĕ чигирь пур. Вĕсене лаша вăйĕпе ĕçлеттереççĕ. Икĕ сехет хушши ĕçленĕ хыççăн пахчари çимĕçсем, вăйлă çумăр хыççăнхи пек, çулçисене кăна шыв айĕнчен кăтартса лараççĕ. Çапла вара кунта çулран çул пысăк тухăçлă пахча-çимĕç туса илеççĕ. Александр Павловичăн чигирьне кăçал районри ытти 5 колхозра та тунă. Унти колхозниксем те Заплаткин юлташа ăшшăн ырласа асăнаççĕ.

Халиччен çакăн пысăкĕш лаптăк çинче пахча-çимĕç туса илме колхоз 7.000 ĕçкунĕ ытла расходланă, кăçал вара пурĕ те 4000 яхăн кăна ĕçкунĕ тухнă. Çимĕçсен тухăçĕ те пĕчĕккĕ пулман. Колхоз висĕ сортлă купăста лартнă. Пахчара 5—6 килограмм туртакан купăста пуçĕсем нумай. Сахăр кăшманĕсем, 6—7 килограмм таяканнисем, купипех выртаççĕ. Унăн чĕркуççи таран ӳсекен çулçисенчен кăна вуншар тонна силос хывма пулать. Пахчара 0.03 гектар сухан акнă; çак лаптăкран, колхоз столовăйĕнче усă курнисĕр пуçне, пĕр тонна ытла пухса илнĕ.

Государствăна пахча-çимĕç парса татнă. Колхоз председателĕ Баранов юлташ каланă тăрăх, пахча-çимĕç государствăна пама та, колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх валеçме те ытлашшипех çитет.

Вăрлăхлăх хăварнă купăстана тата тымар çимĕçсене усрама подвалра уйрăм çӳлĕксем тунă, çӳлĕк çине типĕ хăйăр сарнă.

Александр Павловича тата унăн бригадине кăçал пахча-çимĕç лайăх тата нумай туса панăшăн колхоз членĕсем чĕререн тав тăваççĕ. Тав тума тивĕç те, вăрçăра тăшмана хирĕç çапăçакан Хĕрлĕ Çара пахча-çимĕç боеприпас пекех кирлĕ. Типĕтнĕ пахча-çимĕç, çĕрулми фронтовикăн сывлăхне упрать, паха апат пулса тăрать.

— Эпĕ пĕтĕм вăя хама шанса панă ĕçе хутăм, фронтри хамăн ачасемпе танлашас кăмăлпа ĕçлерĕм, — тет Александр Павлович.

Заплаткин юлташ бригади пахча-çимĕç пухса илнĕ хыççăнах килес çул лартмалли вырăна таран сухаласа хăварнă. Унсăр пуçне «Гвардеец» колхоз кăçал 1,5 гектар çине панулми тата ытти çимĕç йывăççисем лартса хăварма йышăннă. Заплаткин юлташ ертсе пынипе халĕ панулми йывăççисем лартаççĕ. Александр Павлович çурăмĕ çине кĕреçе хурса ирех сад-пахчи пулас вырăна каять те, хĕвел ансан тин таврăнать. Унпа пĕрле бригада членĕсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

В. АКЧЕЛЬ.
М. МИРОНОВА.

ЧКАЛОВСКОЕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00762. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.